# ИККĔМĔШ ГРАММАТИКА

**(В. П. Вишневскин «Начертание правил чувашского языка» кĕнеки тухнăранпа 150 çул çитрĕ)**

ЧĂВАШЛА кĕнекесем кăларас ĕçре вырăс халăхĕн наукăпа культура тата çутĕçĕнче хăнăхусем пулнă. Уйрăмах 1724 çулхи январьте Петербургра уçнă Наукăсен академийĕ чăваш çырулăхне пуçарса ярас ĕçре пысăк вырăн йышăннине палăртмалла. 1769 çулхи май уйăхĕнче Наукăсен академийĕ «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» кĕнеке пичетлесе кăларнă. Ку вăл — вырăс алфавичĕпе усă курса чăвашла пичетлесе кăларнă пĕрремĕш учебник, тăван çырулăхăн пысăк палăкĕ. Унăн тиражĕ — 608 экземпляр.

Малтанхи чăваш кĕнекеçисен ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕ те вырăс кĕнекеçин— Иван Федоровăн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕпе пĕрешкел пулнă.

1788 çулта Чулхулари семинарире ĕçлекен чăваш чĕлхи учителĕ Ермей Рожанский «Краткий катехизис» кĕнекене чăвашла «Кюска катехизис» ятпа куçарнă. Вăл 1800 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне Петербургра 600 экземпляр пичетленсе тухнă.

Чăвашла кĕнекесем пичетлесе кăларас ĕç XIX ĕмĕрте хăвăртрах аталанса кайнă. 1800—1860 çулсенче кăна Петербургра, Мускавра, Хусанта 20 яхăн чăвашла кĕнеке тухнă. Ку вăхăталла чăваш çырулăхĕнче Ермей Рожанский, Петр Талиев, Александра Фукс, Василий Сбоев, Василий Громов, Стефан Элпидин, Алексей Алмазов, пĕртăван Викторпа Матвей Вишневскисем, Спиридон Михайлов, Николай Золотницкий, Василий Магницкий тата ытти куçаруçăсем, чĕлхеçĕсем, фольклористсемпе этнографсем уйрăмах тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

1803 çулта Хусан вĕренӳ округне йĕркеленĕ, 1804 çулта Хусан университетне уçнă. Çапла вара Хусан хули Атăл тăрăхĕнчи, Çĕпĕрти, Вăтам Азири халăхсемшĕн те вĕренӳпе культура вучахĕ пулса тăнă.

Вĕренӳ округĕпе университет тăрăшнипе Хусан кĕпĕрнинчи хуласенче, ялсенче шкулсем, духовнăй училищĕсем, семинарисем уçнă. Часах чăваш ялĕсенче те шкулсем хута кайнă: малтанах Хусанти, Шупашкарти, Оренбургри духовнăй училищĕсемпе семинарисенче чăваш класĕсем уçнă, эрнере виçшер сехет чăваш чĕлхи вĕрентнĕ. Анчах та чăваш чĕлхи учебникĕсемпе пособийĕсем çав тери сахал пулнă-ха ун чухне.

Хусан вĕренӳ округĕ сĕннипе чăваш чĕлхи учебникĕ çырса хатĕрлес ĕçе Хусанти духовнăй семинарире чăваш чĕлхи вĕрентекен Виктор Петрович Вишневский учитель тытăннă. Вăл тăрăшнипе 1836 çулхи июнĕн 19-мĕшĕнче чăваш чĕлхи грамматикин — «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии» кĕнекен алçырăвне çирĕплетнĕ. Пичетлессе вара 1837 çулхи март пуçламăшĕнче тин пичетлесе пĕтернĕ, унтан ăна Хусанти, Оренбургри, Шупашкарти духовнăй училищĕсемпе семинарисенче вĕренекенсем хушшинче сарнă. Çав çулах çулла кĕнекен 83 экземплярне Шупашкарта 1820 çулта уçнă духовнăй училищĕне ярса панă. Чăваш, вырăс ачисем унпа усă курса чăваш чĕлхи вĕреннĕ. Ку вăл — чăваш чĕлхин пичетленсе тухнă иккĕмĕш грамматики, учебникĕ ĕнтĕ.


НАЧЕРТАНІЕ ПРАВИЛЪ
ЧУВАШСКАГО
ЯЗЫКА,
И
СЛОВАРЬ,
СОСТАВЛЕННЫЯ
ДЛЯ
ДУХОВНЫХЪ УЧИЛИЩЪ
КАЗАНСКОЙ ЕПАРХІИ.
КАЗАНЬ.
1836.

Виктор Петрович Вишневский 1804 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче хальхи Вăрнар районĕнчи Сăкăт ялĕнче Петр Степанович священник çемйинче çуралнă. 1822 çулта Хусанти духовнăй семинарирен, 1828 çулта Мускаври духовнăй академирен вĕренсе тухса философи профессорĕн ятне илнĕ. Ун хыççăнхи çулсенче В. П. Вишневский Хусанти духовнăй семинарире тата духовнăй академин мари-чăваш уйрăмĕнчи студентсене чăваш чĕлхи вĕрентнĕ.

«Начертание правил чувашского языка» кĕнеке виçĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайĕ — грамматика. Унта морфологи тата синтаксис ыйтăвĕсене кĕскен çырса кăтартнă. Иккĕмĕш пайĕ — чăвашла-вырăсла словарь, виççĕмĕшĕ — чăваш, тутар, мари чĕлхисенчи сăмахсен танлаштару словарĕ. Çакна палăртмалла: «Начертание правил чувашского языка» кĕнеке чăваш чĕлхин грамматика ыйтăвĕсене хускатнинчен ытларах хăйĕн словарĕсемпе паллă. Кунта 2736 сăмаха чăвашларан вырăсла куçарса кăтартнă. Ку вăл типографи меслечĕпе пичетленĕ чи малтанхи чăвашла-вырăсла словарь. Кунсăр пуçне кĕнекере чăваш, тутар, мари чĕлхисенчи хăшпĕр сăмахсене танлаштарса — пурĕ 419 сăмах — кăтартнă. Çак икĕ словарĕ те паянхи чĕлхе вĕрентĕвĕнче хăйсен хакне çухатман. XIX ĕмĕрти чĕлхе тĕпчевçисем — А. К. Казамбек, Н. И. Золотницкий, Н. И. Ильминский, В. В. Радлов, Н. И. Ашмарин çырнă тăрăх, çак кĕнекери словарьсем грамматика пайĕнчен чылай хаклăрах, усăллăрах пулнă. Асăннă ученăйсем словарьпе усă курса чăваш чĕлхине ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарнă, вĕсен тытăмне, аталану çул-йĕрне тĕпченĕ.

Чăваш чĕлхи вĕрентнисĕр пуçне, Виктор Петрович Вишневский Атăл тăрăхĕнчи Самар, Чĕмпĕр, Саратов кĕпĕрнисенчи чăвашсен пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе те интересленнĕ, тĕпчев ĕçĕсем çырса пичетленĕ. Унăн «Тĕне кĕмен чăвашсемпе марисен йăли-йĕрки» ятлă статйи Вырăс географи обществин ăслăлăх çырăвĕсенче пичетленнĕ. Хăй те вăл 1852 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа çак наука обществин членĕнче тăнă. Унăн ĕçне хастар хутшăннăшăн ăна 1858 çулта кĕмĕл медаль парса чысланă.

В. П. Вишневский хăйпе пĕр вăхăтра пурăннă тата ĕçленĕ чăваш чĕлхеçисемпе, этнографĕсемпе, историкĕсемпе — П. Талиевпа, А. Фукспа, В. Сбоевпа, В. Громовпа, С. Элпидинпа, Н. Золотницкипе туслă пулнă. Н. Бичурина, С. Михайлова, В. Магницкие, И. Яковлева тата вĕсен чăваш çырулăхĕнчи ĕçĕсене аван пĕлнĕ, чăваш ялĕсенче шкулсем уçас, чăвашла кĕнекесем кăларас ĕçре палăрнă. В. П. Вишневский чылай вăхăт Хусанта тухнă чăваш кĕнекисен цензорĕ пулнă. Вăл 1886 çулхи январьте Хусанта 81 çула çитсен вилнĕ.

**А. АЛЕКСЕЕВ,**
**Чăваш кĕнеке издательствин учебниксемпе вĕренӳ пособийĕсен редакторĕ**